26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1944
МАРТ
4
ШАМАТКУН
45(6540) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 2-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 2-мĕшĕнче пирĕн çарсем НАРВА хули енче нимĕçсен оборонин вăйлă çирĕплетнĕ темиçе пунктне туртса илнĕ, НАРВА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри плацдарм çинчи позицисене лайăхлатнă.

ПСКОВ хули енче пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла тапăнса пынă, тăшмана хăйĕн оборонин темиçе тĕреклĕ пунктĕнчен çапса кăларнă.

ОСТРОВ хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, Ленинград облаçĕнчи СОШИХИНО район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ЗАМОШЬЕ, РОЖАНКА, ЦЕРКОВИЩЕ, САМУХИНО, БЕЛОВА, ТЕРЕГАЕВА, ГАСТЕНЫ, ЛОБАНЫ, ДЕДОВЦЫ ялĕсем тата СОШИХИНО, СЕРГИНО чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Мартăн 1-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 23 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 24 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Нарва хули енче пирĕн çарсем хаяррăн çапăçнă хыççăн тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ темиçе пунктне туртса илнĕ. Нимĕçсем темиçе хутчен те контратака тунă, вĕсем хăйсем çухатнă позицийĕсене каялла туртса илме хăтланнă. Гитлеровецсен контратакисене пурне те сирсе янă. Çак çапăçусенче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1.000 çын ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пĕр гвардейски часть, малалла куçса пынă май, гитлеровецсен батальонне аркатса тăкнă. Тупăсемпе тата противотанковăй пăшалсемпе пĕрле, нимĕçсен 8 танкне çунтарса янă, вăл шутра 3 танк «тигр» йышши. Нимĕçсенчен темиçе артиллери батарейине тата пĕр боеприпассем складне тытса илнĕ.

* * *

Псков хули енче пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла тапăнса пынă. Пĕр соединени боецĕсем нимĕçсене темиçе тĕреклĕ пунктран хĕссе кăларнă, трофейсем нумай тытса илнĕ. Пĕр районра пирĕн çăмăллăн куçса çӳрекен отрядсем ăнăçлă маневр тунă та тăшман колонни каялла чакса пыракан çула татнă. Совет танкисчĕсемпе автоматчикĕсем 300 нимĕçе çити пĕтерсе тăкнă, çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 250 лава тытса илнĕ. Тыткăна нумай илнĕ. Разведчик-артиллеристсем. Слепковпа Зинаков лейтенантсем ертсе пынипе, нимĕçсен тĕреклĕ пунктне вăркăнса кĕрсе кайнă та 150 миллиметрлă тупăсен батарейине пĕтĕм кирлĕ боеприпассемпе пĕрлех тытса илнĕ. Совет артиллерисчĕсем çав тупăсене хăвăрт тăшман еннелле çавăрса лартнă та тăшман тупписемпе ăна хăйне пеме пуçланă.

* * *

Остров хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пырса, Ленинград облаçĕнчи Сошихино район центрĕпе чугун çул станцине туртса илнĕ. Ленинград облаçĕнчи партизансем, Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе килĕштерсе çапăçса, нимĕçсене Сошихино чугун çул станцийĕ районĕнче вырнаçса ларакан темиçе ялтан çапса кăларнă. Çав ялсемшĕн пынă çапăçусенче партизансем 500 гитлеровеца ытла вĕлернĕ. Нимĕçсем Германие каторгăна хăваласа каякан 9.000 мирлĕ совет гражданне ирĕке кăларнă. Тăшмантан 3.500 лаша тата 3.000 пуç мăйракаллă шултра выльăх туртса илнĕ.

* * *

Балтика тинĕсĕнче тăшманăн 2.500 тонна таякан суднине шыва путарнă.

* * *

Латыш партизанĕсен «Виестурс» ятлă отрячĕ темиçе кун хушшинче нимĕç çарĕсен 4 телефон станцине аркатса тăкнă, çыхăну тĕлĕшпе ятарласа тунă 22 аппарата тытса илнĕ. Çав отрядри партизансен ушкăнĕсем пĕр яла кĕрсе кайнă та тăшманăн бензин хунă пысăк складне вут тĕртсе янă. Латыш партизанĕсен «Даугава» ятла отрячĕ нимĕçсен пĕр ялти гарнизонне аркатса тăкнă. 32 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн çарсем эсесовецсен «Нордланд» ятлă танковăй гренадерски дивизийĕ вăйлă пораженин кӳрнĕ. Ку дивизи Совет Союзĕн Германи фронтне 1944 çулхи январь уйăхĕнче кăна çитнĕ. Тыткăна лекнĕ салтаксем çак дивизи питех те пысăк çухатусем тӳсни çинчен каласа кăтартаççĕ. Хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсен дивизионĕн офицерĕ — гауптман Паубин çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн дивизион Россиăна [illegible] çитрĕ. Пире тӳрех çапăçăва кĕртсе ячĕç. Анчах та вырăссен артиллерийĕ, пехоти тата танкĕсем эпир нимĕн тума та пултараймарăмăр. Хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем [illegible]. Батарейăсем çĕнĕ позицисене [illegible] вырăс танкĕсем вăркăнса кĕрсе кайрĕç. Хăраса ӳкнĕ дивизион тарма пуçларĕ, хăй тĕллĕн çӳрекен 14 туппине пăрахса хăварчĕ. Тарса çăлăнса юлнă салтаксем, хăраса ӳкнипе, нимĕн тума та юрăхсăр пулса тăчĕç. Каç пулас умĕн эпир пĕр яла çитрĕмĕр. Ку ялта нимĕç салтакĕсем нумайччĕ. Вĕсен шухăш-кăмăлĕсем пурин те питĕ начарччĕ. Çĕрле сĕм-тĕттĕм вăхăтра сасартăк: «Вырăс танкĕсем» тесе кăшкăрнă сасăсем янраса кайрĕç. Эпир урама чупса тухрăмăр та «Т—34» йышши вырăс танкĕсене курах кайрăмăр, вĕсем хыççăн вырăс автоматчикĕсем пыраççĕ. Хирĕç тăни усăсăр пулнă пулĕччĕ, эпир çавăнпа тыткăна парантăмăр. Çак кун пирĕн дивизионăн пурнăçĕ пĕтрĕ».

* * *

Аяларах фашистла нимĕç ирсĕрĕсем Киев облаçĕнчи Ракитно районĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр. «Пирĕн районра Гитлер вăрă-хурахĕсем калама хăрушă преступленисем турĕç. Нимĕçсене хăваласа кăларнă хыççăн Ракитно ялĕнче гитлеровецсем вĕлерни çынсене пытарнă 6 масар тупнă. Тулли мар даннăйсем тăрăх, нимĕç ирсĕрĕсем 600 мирлĕ граждана ытла персе пăрахнă. Тата уйсăр пуçне гитлеровецсем Германи каторгине 1.267 çынна хăваласа кайнă. Фашистсен вăрă-хурахĕсем 28 шкула çаратса, ишĕлтерсе хăварчĕç, библиотекăсемпе шкул пурлăхне çунтарса ячĕç. Бакумовка ялĕнче И. Белозовичпа Л. Белозович учительсем шкул çурчĕпе шкул пурлăхне пушартан çăлса хăварма хăтланчĕç. Нимĕçсем çав учительсене тискеррĕн вĕлерчĕç те, вĕсен ӳчĕсене пĕр шăтăка пăрахрĕç. Гитлер бандичĕсем пурăнмалли 340 çурта тата государствăпа общество учрежденийĕсен 130 çуртне ытла ишĕлтерсе çунтарса ячĕç».

Акт çине алă пуснă: И. Коломиец, А. Колисниченко, Л. Рябенко, Н. Павлюк, М. Шосталь, Т. Ряднина, врач П Беликов, священник Г. Цереpин.

Суворов тата Кутузов орденĕсене пани

Мартăн 2-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ 1-мĕш степень Суворов орденне Совет Союзĕн Маршалĕсене С. М. Буденныя, К. Е. Ворошилова, Б. М. Шапошникова тата А. С. Щербаков генерал-полковника панă. Вĕсене ку орденсемпе Верховный Главнокомандовани хушнă ĕçсене ăнăçлăн туса пынăшăн наградăланă. Çавăн пекех 1-мĕш степень Суворов орденне А. А. Жданов генерал-лейтенанта панă. Ăна ку орденпа боевой операцисене пĕлсе, хăюллă ертсе пынăшăн тата фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче çав операцисене пула тунă çитĕнӳсемшĕн наградăланă. Çав кунах М. И. Калинин юлташ 1-мĕш степень Суворов орденне Совет Союзĕн Геройне арми генералне К. А. Мерецкова, 1-мĕш степень Кутузов орденне артиллери генерал-лейтенантне Г. Е. Дегтярева, Т. Ф. Штыков генерал-лейтенанта тата 2-мĕш степень Кутузов орденне Совет Союзĕн Геройне инженернăй çарсен генерал-лейтенантне А. Ф. Хренова панă. Вĕсене ку орденсемпе боевой операцисене пĕлсе, хăюллă ертсе пынăшăн тата фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче çав операцисене пула тунă çитĕнӳсемшĕн наградăланă. (ТАСС).

Икĕ воскресник пулса иртнĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. ВЛКСМ организацийĕсем пуçарнипе çак уйăхра вырăнти удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе икĕ воскресник пулса иртнĕ. Вăл воскресниксене 1982 çын хутшăннă. Çак воскресниксенче пурĕ 6.302 лав тислĕк кăларнă, 262 центнер кĕл, 183 центнер кайăк-кĕшек тислĕкĕ пухнă.

Шкул ачисемпе комсомолецсем 89 вăкăра кӳлсе çӳреме вĕрентнĕ, вĕсемпе уя тислĕк кăларнă çĕрте усă кураççĕ.

Е. ГОЛАНДЦЕВА.

РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕ

РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн 1944 çулхи мартăн 2-мĕшенчи ларăвĕсем çинчен ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРӲ

Ĕнер, мартăн 2-мĕшĕнче, кăнтăрла 11 сехетре, РСФСР Верховный Совечĕн ларăвĕсем пулакан залра, Кремльте, РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн иккĕмĕш ларăвĕ пулса иртнĕ.

Ларăва РСФСР Верховный Совет Председателĕн заместителĕ **А. Х. Тынчеров** депутат председатель пулса ертсе пынă.

Кун йĕркинче — РСФСР-ăн 1944 çулхи государство бюджечĕ çинчен тата РСФСР-ăн 1940-мĕш, 1941-мĕш, 1942-мĕш çулсенчи государство бюджетне пурнăçлани çинчен тунă доклада сӳтсе-явасси.

Пренире çаксем тухса каланă: депутатсем — **А. А. Баранов** (Минеральные Воды округĕ, Ставрополь крайĕ), **Р. К. Ибрагимов** (Мелеузовски округ, Пушкăрт АССР-ĕ), **А. Д. Абрамов** (Череповец хула округĕ, Вологда облаçĕ), **З. А. Андреева** (Çĕрпӳ округĕ, Чăваш АССР-ĕ), ĕççынни депутачĕсен Горький область Совечĕн исполкомĕн Председателĕ **А. П. Ефимов**, депутатсем — **А. М. Предтеченский** (Ивановски-Сталински округ, Иваново облаçĕ), **Г. Г. Измайлова** (Пăва округĕ, Тутар АССР-ĕ), ĕççынни депутачĕсен Смоленск область Совечĕн исполкомĕн Председателĕ **Р. Е. Мельников** юлташ, депутатсем — **П. С. Тарасов** (Волоколамск округĕ, Мускав облаçĕ), **И. К. Лоскутов** (Автозавод округĕ, Горький облаçĕ).

Çакăнпа РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн иккĕмĕш ларăвĕ хупăннă.

* * *

Мартăн 2-мĕшĕнче каçхине 6 сехетре РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн виççĕмĕш ларăвĕ пулса иртнĕ.

Ларăва РСФСР Верховный Совет Председателĕн заместителĕ **А. Х. Тынчеров** депутат председатель пулса ертсе пынă.

Кун йĕркинче — РСФСР-ăн 1944 çулхи государство бюджечĕ çинчен тата РСФСР-ăн 1940-мĕш, 1941-мĕш, 1942-мĕш çулсенчи государство бюджетне пурнăçлани çинчен тунă доклада сӳтсе-явасси.

Пренире çаксем тухса каланă: депутатсем — **П. В. Аммосов** (Алдан округĕ, Якут АССР-ĕ), **А. М. Батамиров** (Ольховат округĕ, Воронеж облаçĕ), **М. В. Сарычева** (Загорск округĕ, Мускав облаçĕ), РСФСР-ăн Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссарĕ **С. Д. Романычев** юлташ, **П. С. Попков** депутат (Московски-Ленински округ, Ленинград хули), ĕççынни депутачĕсен Свердловск хула Совечĕн исполкомĕн Председателĕ **В. П. Головин** юлташ, **А. П. Староторжский** депутат (Бологое округĕ, Калинин облаçĕ).

Çакăнпа РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн виççĕмĕш ларăвĕ хупăннă.

Мартăн 2-мĕшĕнчи ирхи лару

РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V-мĕш Сессийĕн ларăвĕ ирхине 11 сехетре пуçланнă. Председатель сĕтелĕ хушшинче — РСФСР Верховный Совечĕн Председателĕ **А. А. Жданов** депутат, РСФСР Верховный Совет Председателĕн заместителĕсем **А. Х. Тынчеровпа М. В. Сарычева** депутатсем. Ложăсенче — РСФСР Верховный Совет Президиумĕн членĕсем тата РСФСР Халăх Комиссарĕсем.

Ларăва РСФСР Верховный Совет Председателĕн заместителĕ **А. Х. Тынчеров** депутат председатель пулса ертсе пырать.

Сесси РСФСР-ăн 1944 çулхи государство бюджечĕ çинчен тата РСФСР-ăн 1940-мĕш, 1941-мĕш, 1942-мĕш çулсенчи государство бюджетне пурнăçлани çинчен тунă доклада тата бюджет комиссийĕн содокладне сӳтсе-явма тытăнать.

Чи малтан **А. А. Баранов** депутат сăмах илет. Вăл РСФСР-ăн 1944 çулхи государство бюджетне çирĕплетме сĕнет. Баранов юлташ: бюджетпа пăхнă укçа-тенкĕ Ставрополь крайĕнче тăшман ишсе пĕтернĕ хуçалăха тӳрлетмелли ĕçсене татах та анлăнрах вăйлатса яма пулăшĕ, тесе палăртать.

— Пушкăрт АССР-ĕнчи ĕççыннисем, — тет **Р. К. Ибрагимов** депутат, — Россия Федерацийĕн ытти халăхĕсемпе пĕрле РСФСР-ăн 1944 çулхи государство бюджетне çирĕплетнине пурте ырлĕç. Пушкăрт халăхĕ хăйĕн пĕтĕм вăй-халне тăшмана çĕнтерес ĕçе парать.

А. Д. Абрамов депутат—Вологда облаçĕ хăйĕн бюджетне пур статьясем тăрăх та пурнăçа кĕртнĕ, тесе пĕлтерет. Вологда облаçĕн 1944 çулхи бюджетĕнче,—тет Абрамов юлташ,—социаллă-культурăллă ĕçе каймалли расходсем пуриншĕн те ытларах ӳсеççĕ. Шкулсен шучĕ ӳсе пынă май, учебниксене ытларах кăлармалла тăвас пулать тата учительсем хатĕрлес ĕçе лайăхлатас пулать.

— РСФСР-ăн 1944 çулхи государство бюджечĕн проектĕнче, — тет **З. А. Андреева** депутат, — пĕр çар лагерĕ пулса тăнă пирĕн Тăван çĕршыври халăхсем пĕрле тачăн пĕтĕçни палăрса тăрать. Хĕрлĕ Çар речĕсенче чăваш халăхĕн ывăлĕсемпе хĕрĕсем те СССР-ти ытти тăванла халăхсемпе пĕр танах паттăррăн та хăюллăн çапăçаççĕ. Çав вăхăтрах Чăваш çĕршывĕнчи рабочисемпе колхозниксем тата интеллигенци тылра хăйсене хăйсем хĕрхенмесĕр, çĕнтерĕве çывхартас тесе, тăрăшса ĕçлеççĕ. Çак вăрçă Чăваш республикин культура ӳсĕмне чарса лартмарĕ, социаллă-культурăллă ĕçсем тума паракан укçа-тенкĕ хисепĕ çулран çулах ӳссе пырать. Чăваш республикин столицинче Шупашкар хулинче халăх шучĕ ӳссе пынă май, Андреева депутат РСФСР Верховный Советĕнчен Шупашкарти театра аслăлатса çĕнетме паракан укçатенкĕ хисепне 500.000 тенкĕ таран ӳстерме ыйтать.

Сăмах Горький облисполкомĕн председателĕ **А. П. Ефимов** юлташ илет.

— Сесси çирĕплетме тăратнă бюджет, — тет вăл, — пирĕн тăван халăхăн чи сывăх интересĕсене палăртса тăрать, вăл çак вăрçăн пысăк йывăрлăхĕсене чыслăн тӳссе ирттернĕ совет экономикипе совет финансĕн çирĕплĕхĕ çинче никĕсленсе тăрать.

— Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пынипе пирĕн тăван Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерӳсем, — тет **А. М. Предтеченский** депутат (Иваново облаçĕ), — совет наукин мĕнпур деятелĕсене, уйрăмăн каласан, медицина работникĕсен нумай пинлĕ çарне хамăр Тăван çĕршывăн мухтавĕшĕн вăя хĕрхенмесĕр ĕçлеме хаваслантараççĕ. Сесси çирĕплетме тăратнă бюджет совет наукине малалла аталантарса пыма, ĕççыннисен культурăпа йăла условийĕсене татах та ытларах лайăхлатма пулăшĕ.

Г. Г. Измайлова депутат хăйĕн сăмахĕнче тутар халăхĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан Отечественнăй аслă вăрçа мĕнле хастарлăн хутшăнни çинчен калать.

Измайлова депутат Тутар АССР-ĕнчи хуласене лайăхлатма, вырăнти промышленноçа вăйлатма, пĕчĕк шывсем тăрăх çӳрекен флота тума паракан укçа-тенкĕ шутне ӳстерме ыйтать.

Ĕççынни депутачĕсен Смоленск область Совечĕн исполком председателĕ **Р. Е. Мельников** юлташ хăйĕн сăмахĕнче Смоленск облаçне фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă хыççăн унта хуçалăха юсаса ура çине тăратас тĕлĕшпе çав тери пысăк ĕçсем туса ирттерни çинчен каласа кăтартать.

Фашистла нимĕç оккупанчĕсем ишĕлтернĕ хуçалăха тепĕр хут ура çине тăратма 1944 çулта нумай укçатенкĕ памалла тунă. Çав укçа-тенкĕне ĕçе ярасси строительство материалĕсен промышленноçне мĕн тери хăвăрт ура çине тăратнинчен килет. Мельников юлташ РСФСР-ăн строительство материалĕсем енĕпе ĕçлекен Халăх Комиссариачĕн ĕçне хытă критиклет. Ку комиссариат хăйĕн задачисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ытма çук вăраххăн ĕçлет. Мельников юлташ çавăн пекех тата коммунальнăй хуçалăх, вырăнти промышленность Наркомачĕсен тата çĕнĕрен организациленĕ граждански сооруженисен Наркомачĕн ĕçĕсене те хытăн критиклет.

П. С. Тарасов депутат çапла калать: Россия Федерацийĕнчи мĕнпур крайсемпе республикăсем пекех, Мускав облаçĕ те гитлерла захватчиксене хирĕç пыракан пĕтĕм халăхăн аслă çапăçăвне активлăн хутшăнать. Партипе правительство пулăшнипе, Мускав хулинчи ĕççыннисем пулăшнипе, Мускав облаçĕнчи ĕççыннисем вăхăтлăха тăшман аллинче пулнă районсенчи хуçалăха ура çине тăратас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем турĕç, тет вăл.

И. К. Лоскутов депутат Горький хулинчи Молотов ячĕпе тăракан автомобиль заводĕнчи рабочисен нумай пинлĕ коллективĕ хăйне хăй хĕрхенмесĕр хавасланса ĕçлени çинчен каласа парать.

РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш Сессийĕн ирхи ларăвĕ çакăнпа пĕтет. (ТАСС)

Мартăн 2-мĕшĕнчи каçхи лару

Каçхине 6 сехетре РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн каçхи ларăвĕ уçăлнă. Каçхи ларура РСФСР-ăн 1944 çулхи государство бюджечĕ тата 1940-мĕш, 1941-мĕш, 1942-мĕш çулсенчи бюджета пурнăçа кĕртни çинчен тунă доклада тата бюджет комиссийĕн содокладне малалла сӳтсе-явнă.

Председатель пулса ертсе пыраканĕ — РСФСР Верховный Совет Председателĕн заместителĕ **А. Х. Тынчеров** депутат **П. В. Аммосов** депутата сăмах парать.

— Якутин мĕнпур пуянлăхĕсем,— тет Аммосов юлташ, — ылттăн, тăхлан, хаклă йышши чирсем, пулă, слюда пĕтĕмпех фронта пулăшнă çĕре каяççĕ. Аммосов юлташ Верховный Советăн Сессине Якути ĕççыннисем 1944 çулхи государство бюджетне ăнăçлăн пурнăçа кĕртес, çапла вара, фронта пулăшассине вăйлатас тесе, мĕн кирлине пурне те тăвĕç, тесе шантарать.

Тула облаçĕнчи ĕççыннисем, — тет **А. М. Батамиров** депутат,—нимĕç захватчикĕсене татăклăн отпор панăскерсем, хăйсен тăван хулине нимĕç захватчикĕсенчен сыхласа хăварнăскерсем, халĕ хăйсен хуçалăхне юсаса ура çине тăратас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

— 1944 çулхи государство бюджечĕ, — тет **М. В. Сарычева** депутат, — Сталин юлташ Совет государстви нихăçан та хальхи пек, Отечественнăй вăрçăн виççĕмĕш çулĕнчи пек çирĕп те хăватлă пулманни çинчен каланисене çирĕплетсе парать. Совет государствин пĕтĕм бюджечĕпе пĕрлех столицăн —Мускав хулин бюджечĕ те çулран çулах ӳссе пырать. Виççĕмĕш черетри метрона ĕçе янă тата тăваттăмĕш черетри метрона та пума тытăннă, тăватă çĕрте путепроводсем тунă, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха лайăхлатас енĕпе пысăк ĕçсем пыраççĕ. Халăха çутта кăларас ĕç валли уйăрнă укçа-тенкĕ 1944 çулта Мускаври шкулсен хисепне чылай ӳстерме май парать. Кăçалхи çул ачасен çуртчĕсем çĕнĕрен 39 çĕрте уçмалла. Халăх сывлăхне сыхлас ĕçе каякан расходсен хисепĕ те чылай ӳсет.

РСФСР Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссарĕ **С. Д. Романычев** юлташ апат-çимĕç промышленноçĕ, вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисене пăхмасăр, Хĕрлĕ Çара апат-çимĕçсем çителĕклĕх парса тăма пултарнине палăртать.

Ленин хулине паттăррăн хӳтĕлесе хăварни çинчен, мухтавлă ленинградецсен геройлăхĕпе патриотизмĕ çинчен **П. С. Попков** депутат тĕплĕн каласа парать.

— Пĕтĕм ленинградецсен ячĕпе,— тет Попков юлташ, — эпĕ сире çак трибуна çинчен çулăмлă салам калатăп. Ленин хулине тăшман хупăрласа илнинчен хăтарнăшăн хамăрăн Хĕрлĕ Çара, Совет правительствине, тăван Сталина пысăк тав!—Çак сăмахсене нумайччен тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ.

Тăшман Ленинград хулине 900 кун хупăрласа тăнă. Çак тапхăрта пĕтĕм совет халăхĕ, тĕнчери пĕтĕм тӳрĕ кăмăллă çынсем Ленинграда хӳтĕлекенсен историре нихăçан пулман паттăр кĕрешĕвне сăнаса тăчĕç. Ленинград хулине хӳтĕлекенсен вăйĕпе паттăрлăхĕ — вĕсем тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн юратнинче, тăшмана çĕнтерессине çирĕп шанса тăнинче, хулана тăшман аллине париччен вилме хатĕр тăнинче пулчĕ. Ленинград çĕнтерчĕ, мĕншĕн тесен ленинградецсем пĕрмаях, чи йывăр кунсенче те, хăйсене пĕтĕм çĕршыв пулăшнине, вĕсемпе пĕрле аслă Сталин пулнине пĕлсе тăнă, аслă Сталин тăванла тăрăшнине, пулăшнине туйса тăнă. Ленинград çĕнтерчĕ, мĕншĕн тесен ăна хӳтĕлесе хăварас ĕçе большевиксен малта пыракан отрячĕ — Сталинăн шанчăклă вĕренекенĕ Андрей Александрович Жданов ертсе пыракан Ленинградри парти организацийĕ организацилесе пынă.

Депутатсемпе хăнасем çак сăмахсене тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. Аслă Сталина, Ленинградри большевиксен руководительне Жданов юлташа саламласа тăвăллăн алă çупни нумайччен лăпланаймасть.

— Хулан пĕтĕм пурнăçне, — тет Попков юлташ, — вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек йĕркеленĕ. Ленинградецсем пĕчĕккисем те, пысăккисем те хĕрарăмсем те, стариксем те тата ачасем те пурте пĕр шухăшпа—тăшмана хулана кĕртес мар шухăшпа пурăннă. Гитлеровецсем, Ленинград хулине тӳрех пырса кĕрсе йышăнма шутлани арканса кайнă хыççăн, ăна выçăпа пĕтерме, ăна хӳтĕлекенсене сывлăшран бомбăсем пăрахса тата артиллерирен персе тăрса пĕтерме шутларĕç. Фашистла вăрă-хурахсен çакăн пек шухăшĕсем те арканса кайрĕç. 1941 çулхи ноябрь уйăхĕнче, Жданов юлташ пуçарнипе, Ладога кӳлли урлă çул тума тытăннă. Вăл çула кĕске срокрах туса пĕтернĕ, вăл нумай грузсем çӳретекен хăватлă çул пулса тăчĕ.

Кун хыççăн умма тепĕр пысăк ыйту — Ленинграда топливăпа электроэнерги парас ыйту тухса тăчĕ. Çак ыйтăва та ăнăçлăн татса панă. Ленинградецсем çӳртсене ăшăтма йывăçран тунă çурт-йĕрсене пăсрĕç, йывăр условисенче Ладога кӳлли урлă 25 пин тонна ытла кăмрăк турттарса пынă. 1942 çулхи март уйăхĕн вĕçĕнчен пуçласа, ВКП(б) Ленинград хула комитечĕ тата Ленинград Совечĕ чĕннипе, ĕçлеме пултаракан пĕтĕм халăх хулана тасатма тухрĕ, апрелĕн 15-мĕшĕ тĕлне хулана тивĕçлĕн йĕркене кĕртсе çитерчĕ. Çуллахи вăхăтра ленинградецсем, хăйсен пахчисенче тăрăшса ĕçлесе, пахча-çимĕçсем çителĕклĕ туса илчĕç.

— 1943 çулхи январь уйăхĕнче тăшман блокадине татса пăрахни,— тет Попков юлташ, — ленинградецсене çĕнĕ вăй-хăват пачĕ. Кун хыççăн Ленинград çĕршывпа чугун çул тăрăх сыхăнса тăрассине йĕркелене, çапла вара вăл хуçалăх тĕлĕшĕнчен çĕршывпа сыхăнса тăрассине чылай аслăлатнă. Анчах та тăшман хула стенисем патĕнчех тăнă, вăл хулана кашни кунах йывăр сурансем кӳнĕ. Ленинградецсем, фронт условийĕсене пăхмасăр, хăйсен хуçалăхне çирĕплетсе, аталантарса пычĕç. 1942 çулхи кĕркуннехи вăхăтра кăна хулари халăхсен вăйĕпе пурăнмалли çурт çийĕсене 4.360 пин тăваткăл метр чухлĕ юсанă, водопровод трубисене 66,6 километр тăршшĕ юсаса ĕçе кĕртнĕ. 1943 çулта вара пурăнмалли çуртйĕрсене 131 пин тăваткăл метр чухлĕ юсанă.

Тăшман блокадине татса тухнă хыççăн пĕр çулталăк иртсен, Ленинград фрончĕн çарĕсем нимĕçсен Ленинград патĕнчи вăйлă çирĕплетнĕ оборонине аркатса тăкрĕç. Вĕсем, тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкса, Ленинград блокадине пĕтĕмпех пĕтерчĕç.

Попков юлташ Ленинграда хупăрласа тăракан гитлеровецсен нумайĕш пайне Ленинград фронтĕнчи çарсем пĕтерсе тăкни çинчен каланине залра ларакансем тăвăллăн алă çупса кĕтсе илчĕç.

Индустриллĕ Урал центрĕ — Свердловск хули культура тĕлĕшĕнчен ӳссе пыни, вăл вăрçă çулĕсенче Хĕрлĕ Çарăн чи паха арсеналĕ пулса тăни çинчен Свердловск хула Совет исполкомĕн председателĕ **В. П. Головин** юлташ каласа парать.

А. П. Староторжский депутат, Калинин облаçĕнчи ирĕке кăларнă районсенче хуçалăха юсаса ура çине тăратас ĕç анлăн саралса пыни çинчен каласа, рабочисемпе колхозниксем тата интеллигенци Совет правительстви хăйсемшĕн тăрăшнине тата пулăшнине çĕнĕрен ытларах вăй хурса ĕçлесе ответлеççĕ тесе палăртать.

Çакăнпа РСФСР Верховный Совечĕн V-мĕш сессийĕн каçхи ларăвĕ хупăнать. (ТАСС).

Çуракине хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăх

Çуракине пур колхозсен те хатĕрленсе çитмелле

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, мартăн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Фронтовой уйăхлăх пуçланнăранпа чылай колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç вăйланчĕ. Калинин, Чкалов ячĕсемпе тăракан колхозсенче вăрлăха сортласа тасатса пĕтерчĕ. Чкалов ячĕпе тăракан колхозра вăрлăх участокĕ çине акмалли 50 пăт тулла алăпа суйласа хунă. Унăн шăтас пахалăхĕ пысăк. «Комбайн» колхозра та вăрлăхсене сортласа хунă, кунта клевер вăрри кăна çитместчĕ, ăна та халĕ «Пятилетка» колхозран улăштарса илчĕç. Ильич ячĕпе тăракан колхозра вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене сортласа хунă тата шăтас пахнă, тырăсем кунта 96—99 процент шăтаççĕ.

Районра вăрлăх çитмен колхозсем те пур-ха. «Унгастрой» колхозăн 26 центнер тулă тата сĕлĕ те çитмест. «Красный пахарь» колхозăн (председателĕ Антоков юлташ) вăрлăхсем начар, вĕсене кирлĕ пек тасатман, çавăнпа вĕсен шăтас пахалăхĕ ытла та начар. «Красный пахарь» колхозăн (председателĕ Куприянов юлташ) вăрлăхлăх тулă тата çĕрулми çитмест. Ун пек колхозсем районра татах та пур. Çапла пулсан та, кунта колхозниксенчен вăрлăхлăх тырă кивçен пухас пирки нимĕн те тумаççĕ, ытти колхозсенчен улăштарса илес ĕçе те организацилемен. Калас пулать, районри партипе совет организацийĕсен руководителĕсем те кун пирки нимĕн те шутламаççĕ.

„Луга“ колхозра çуракине хатĕрленмеççĕ

Шупашкар районĕнчи Самуккасси ялĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз çуракине аван хатĕрленет. Фронтовой уйăхлăхра кунта пур ĕçе те туса çитерес тесе тăрăшаççĕ. Колхоз председателĕ Петрова юлташ вăрлăхсене тасатас, вĕсен пахалăхне сăнас ĕçе мĕнпур колхозниксене хутшăнтарнă. Плугсене, сӳресене тата машинăсене мĕнле юсанине тĕрĕслеççĕ, çитменлĕхсене тупсан, çийĕнчех тӳрлетеççĕ. Кунта ватти те, çамрăкки те çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлет.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозпа юнашар Пикшик ялĕнчи «Луга» колхозра ĕç пачах урăхла пара. Кунта çуракине ытла та япăх хатĕрленеççĕ. Колхоз бригадирĕ Анастасия Никитина юлташ плугсене юсама мар, вĕсене пухас пирки те нимĕн те тумасть, вĕсем халĕ те уйрах юр айĕнче выртаççĕ. Сӳресем ăçта выртнине пĕлмеççĕ те.

«Луга» колхоз иртнĕ ялхуçалăх çулне начар ĕçлесе ирттерчĕ, çавна пула вара унăн тырпул тухăççăр пулчĕ.

Колхоз председателĕн Гаврилова юлташăн иртнĕ çулхи йăнăшĕсене асра тытмалла, çуракине хатĕрленес ĕçе пур колхозниксемпе колхозницăсене те мобилизацилемелле.

И. АНДРЕЕВ.

Çитменлĕхсене пĕтермелле

СĔНТĔР. Районри колхозсем вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çуракине хатĕрленесçĕ. Колхозсем çуракине большевикла ирттерме тăрăшаççĕ. Çак ĕçе Ярославкăри «Первая борозда» колхоз та тимлĕнех хатĕрленет.

Колхозăн вăрлăхсем ытлашшипех çитеççĕ, вĕсене сортласа хунă. План тăрăх уя 1.200 лав тислĕк кăлармалла пулнă пулсан, 1.510 лав кăларнă, кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухас плана та тултарнă.

Ут таврашĕсем çителĕклĕ. Вĕсене юсас тĕлĕшпе старши конюх Кудряшов юлташ тăрăшса ĕçлет. Халĕ кашни лаша валли пĕр комплект юсанă е çĕнĕрен туяннă. Колхоз сĕрмелли материалсем тĕлĕшпе те аптăрамасть. Тикĕт тата маç кирлĕ чухлех хатĕрлесе хунă.

Çураки вăхăтĕнче лашасене тăрантарма фонд çителĕклĕ уйăрса хунă. Кашни лашана апат мĕнле нормăпа парассине шутласа хунă. Колхозăн туртăм вăйĕ те çитет. Халĕ тата çамрăк тихасене кӳлме вĕрентеççĕ.

Çак паха ĕçсемпе пĕрлех колхозăн çитменлĕхсем те пур. Колхозăн 100 лав торф хатĕрлемеллеччĕ, анчах торфлă вырăнсем çук тесе нимĕн чухлĕ те хатĕрлемен. Ялхуçалăх машинисене чылайĕшне юсаман. Плугсем ытлашшипех пур пулин те, нумайĕшне юсаман, çитменнине вĕсем юр айĕнче выртаççĕ.

Çак çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

З. СЕМЕНЧУК.

Вăкăрсемпе ĕçлеççĕ

Вăрçă вăхăтĕнче лашасем ялхуçалăхĕнче кăна мар, Хĕрлĕ Çар валли те кирлĕ. Çакна шута илсе, Шупашкар районĕнчи Иккассинчи «1-ое Мая» колхозри Кузнецовпа Николаев колхозниксем икĕ вăкăра кӳлме вĕрентрĕç.

Вăкăрсем ĕçре лашасем пекех тӳрĕ те лăпкă, пĕр пăркаланмасăрах пыраççĕ. Халĕ вĕсемпе вăрмантан вутă турттараççĕ, ялхуçалăхĕнчи ытти ĕçсенче те усă кураççĕ.

Н. МЫШКИН.

Кӳршĕри колхозсене кăçал та пулăшатпăр

Кăçалхи çуракине те эпир, пĕлтĕрхи пекех, тимлĕн хатĕрленетпĕр. Вăрлăхсем, пăрçасăр пуçне, çителĕклĕ. Пăрçа вырăнне эпир тулă хывăмăр. Вăл тулла çак кунсенчех юнашар колхозсемпе пăрçапа улăштаратпăр. Вăрлăхсем таса, вĕсене тивĕçлĕ кондицие лартнă. Плугсемпе сӳресене, ялхуçалăх машинисене лĕтĕмпех юсанă. Лашасем пирĕн пурте самăр. Çуракине кĕске вăхăтра ирттерме пирĕн пур майсем те пур.

Иртнĕ çул пирĕн колхоз юнашар колхозсене 624 центнер вăрлăх парса пулăшрĕ. Кăçал та эпир вăрлăх унтан кая мар паратпăр. Çĕрулмипе пахча-çимĕç вăрлăхĕсем те пирĕн ытлашшипех çитесçĕ, ку енчен те юнашар колхозсене пулăшма шутлатпăр.

Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем, фронтовой уйăхлăхра çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитес тесе, ырмиканми ĕçлеççĕ. Çак ĕçре пире Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсем хавхалантарса пыраççĕ. Çитес çуракине ăнăçлăн кĕтсе илсе ăна вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ирттерессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлетпĕр.

Е. МАРТЫНОВ,
Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Лайăх ĕçлесе фронтовиксен мухтавне тивĕçлĕ пулар

Красноармейски районри «Сила» колхоз членĕсем иртнĕ çул гектартан вăтам шутпа 14-шер центнер, уйрăм участоксенчен 19-шар центнер тырă туса илнĕ. Государствăна, обязательство тăрăх, тырă иртнĕ çулшăн кăна мар 1944 çулшăн та панă. Ĕçкунĕсем çине 2,6-шар килограмм тырă валеçнĕ.

Колхозăн фермисенче халĕ выльăхчĕрлĕхсен йышĕ 1940 çулхинчен пысăкрах. Колхоз фронтовиксен çемьисене чылайĕшне сыснасем парса пулăшнă. Нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозниксем валли 5 сурăх ярса панă.

Выльăхсене кунта лайăх пăхаççĕ. Çамрăк выльăхсем валли уйрăм сурт лартнă.

Колхозниксем хайсем мĕнле ĕçлени çинчен фронтри тăванĕсем патне çырусем яраççĕ. Вăрманкасран фронта кайнă паттăрсем килĕсене таврăнсан, вĕсен тăван колхозĕ вăрçă кунĕсенче мирлĕ вăхăтринчен нумай лайăхрах ĕçленине курĕç. Вĕсем ĕçчен колхозниксене тата колхоз председательне коммунист А. Павлов юлташа фронта лайăх пулăшса тăнăшăн тав тăвĕç.

Кăçалхи çул колхоз уя иртнĕ çулхинчен икĕ хут ытларах тислĕк кăларать. Халĕ 2250 лав тислĕк тăкнă. Çĕре апатлантарма 30 центнер кĕл, 44 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

Çуркунне тислĕк шывĕсене, юр шывĕсене тытса юлма хатĕрленеççĕ. Кĕрхи калчасене иртнĕ çулхинчен ытларах апат пама палăртнă. Кашни колхозник хăйĕн агротехникăлла пĕлĕвне ӳстерсех пырать.

Колхоз çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе кĕркуннех ĕçлеме тытăннă. Пăрçа йышши тырăсене колхозниксем алăпа сортласа тасатнă.

Колхозра пур çĕрте те ĕç вĕресе тăрать. Колхозри тимĕрçĕ плугсемпе ытти машинăсене юсаса пĕтерчĕ. Колхозри платниксем Г. Архипов, В. Захаров юлташсем 23 сӳре юсанă, 4 сӳре, 6 çуна çĕнĕрен тунă. Захаров юлташ сӳресемпе плугсем валли 18 турта туса хатĕрленĕ. А. Киров, К. Григорьев, Архипов колхозниксем пăявсем, урхалăхсем, хырăмсалăхсем яваççĕ. Вĕсем кĕске вăхăт хушшинче 70 урхалăх явнă.

Бригадăсем çумне çĕр участокĕсене çирĕплетнĕ, звеносем уйăрса, вĕсен аллине машинăсем, ĕç хатĕрĕсем панă. Ферма заведующийĕ Прокопьев юлташ 7 вăкăра кӳлсе çӳреме вĕрентет.

Çураки вăхăтĕнче лашасене çитерме 225 пăт сĕлĕ, 300 пăт посыпка, 100 центнер утă хатĕрленĕ.

Колхоз председателĕ Павлов юлташ çапла калать:

— Кăçал çуракине нихăшсулхинчен те лайăхрах ирттерме шутлатпăр. Нумай пулмасть МТС тракторĕсем валли çуракинче ĕçлеме 140 килограмм краççин кӳрсе килтĕмĕр. Çапла вара машинăсемпе, лашасемпе ĕçлесе акана кĕске вăхăтра туса пĕтерме ĕмĕт пур.

С. ШАДИН.

Ĕç хĕрӳллĕ пырать

ИШЛЕЙ. Сарчакри Киров ячĕпе тăракан колхоз çуракине хĕрӳллĕн хатĕрленет. Колхоз çураки валли вăрлăхсене çителĕклĕ хывса, вĕсене тасатса хунă. Уйра планран ирттерсе 60 гектар çинче юр тытнă. Уя 1050 лав тислĕк кăларнă, 30 центнер кĕл тата 32 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Вырăнти удобренисене пухас тĕлĕшпе уйрăмах Бурдасова Фекла колхозница тăрăшса ĕçлет, вăл хăйĕн килĕнчен 1,5 центнер кĕл тата пĕр центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса панă. Ялхуçалăх инвентарĕсемпе ут таврашĕсене юсас тĕлĕшпе уйрăм бригада ĕçлет. 15 колхозник агрокружокра вĕренеççĕ, кружока колхозри агроном ертсе пырать. Кунта кашни колхозник кăçал вăйлă тырпул туса илессишĕн ир пуçласа каçченех колхоз ĕçĕнче хастарлăн ĕçлет.

В. НИКИФОРОВ.

Вырăнти удобренисем пухатпăр

ОКТЯБРЬСКОЕ. Çичĕ Пӳртри Чапаев ячĕпе тăракан колхоз тырă тухăçлăхне ӳстерес ĕçре вырăнти удобренисем пысăк вырăн йышăннине ăнланса илнĕ. Паянхи куна 3.875 лав тислĕк кăларнă. Ку ĕçре уйрăмăнах çамрăксем В. Башкиров, А. Источников, В. Ильичев юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Колхоз 24 центнер кĕл, 53 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ. 20 центнер фекали пухнă.

Çуракине хатĕрленес тата вырăнти удобренисене пухас енĕпе Сидоров юлташăн бригади малта пырать.

С. РУМЯНЦЕВ.

Чугун çул валли вутă

Республикăри районсем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли çулталăкри плана 1943 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1944 çулхи мартăн 1-мĕшĕччен мĕн чухлĕ тултарнине кăтартакан

СВОДКА

Районсем	Плана тултарнă (процентпа): Турттарас енĕпе	Плана тултарнă (процентпа): Хатĕрлес енĕпе	Мĕнле вырăнта тăрать: Турттарас енĕпе	Мĕнле вырăнта тăрать: Хатĕрлес енĕпе
Шăхасан	87,3	102,2	1	1
Йĕпреç	83,9	87,3	2	4
Вăрнар	82,8	90,8	3	3
Сĕнтĕрвăрри	76,2	94,4	4	2
Шупашкар	75,2	82,5	5	6
Ишлей	69,5	61,4	6	19
Первомайски	68,6	81,3	7	7
Çĕмĕрле	66,2	59,2	8	22
Октябрьски	65,3	67,9	9	14
Канаш	63,6	79,8	10	9
Куславкка	63,1	58,9	11	23
Хĕрлĕ Чутай	63,0	74,4	12	11
Комсомольски	62,6	66,2	13	15
Етĕрне	62,0	65,0	14	16
Калинино	61,6	83,6	15	5
Елчĕк	61,0	70,6	16	12
Сĕнтĕр	56,8	55,8	17	26
Советски	55,1	61,0	18	20
Вăрмар	54,5	81,5	19	8
Çĕрпӳ	54,4	74,7	20	10
Улатăр	52,4	68,0	21	13
Пăрачкав	50,9	60,4	22	21
Красноармейски	50,3	63,0	23	18
Элĕк	47,8	53,3	24	27
Тăвай	41,7	63,4	25	17
Кувакино	37,1	46,0	26	28
Чкаловски	35,5	56,0	27	25
Шăмăршă	30,5	56,8	28	24

Асăрхаттарни: Кувакинăпа Шăмăрша районĕсем тăрăх даннăйсем февралĕн 25-мĕшĕ тĕлне, Куславкка районĕ тăрăх даннăйсем февралĕн 26-мĕшĕ тĕлне пулнисемех юлаççĕ.

Вутă хатĕрлес ĕçе кая хăвармалла мар

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Тĕрер ялсоветĕнчи «Труд» колхозăн план тăрăх вăрмана ĕçлеме çуран 7 çын, лашапа 4 çын ямалла. Анчах та паянхи куна вăрманта çуран 3 çын, лашапа 3 çын кăна ĕçлеççĕ. Ку колхозăн кăçал 1008 кубометр вутă турттармалла, вăл 218 кубометр яхăн çеç турттарнă. Çавăн пекех вутă хатĕрлес ĕç те юлса пырать, 600 кубометр касса хатĕрлес вырăнне 422 кубометр кăна хатĕрленĕ.

Вăрман хатĕрлесси— паян тумалли ĕç

КУСЛАВККА. (Телефонпа). Районри малта пыракан колхозсем чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесе турттарас ĕçе вĕçлесе пыраççĕ. Молотов ячĕпе тăракан колхоз ку енĕпе çулталăкри плана февралĕн 1-мĕшĕ тĕлнех пурнăçланă. Паянхи куна районра çак ĕçе 11 колхоз туса çитернĕ.

Анчах та вăрман хатĕрлес ĕç, пĕтĕмĕшпе илсен, çителĕксĕр пырать-ха. «Красная Волга», «Новая жизнь» колхозсем çак ĕçе уйрăмах кая хăварса пыраççĕ. «Новая жизнь» колхозăн 2094 кубометр вутă хатĕрлемелле, 2117 кубометр турттармалла пулсан, вăл паянхи куна 837 кубометр хатĕрленĕ, 781 кубометра яхăн турттарнă. Асăннă колхозсем вăрмана ĕçлеме ĕç вăйĕ çителĕклĕ таран ямаççĕ.

Колхоз председателĕсен вутă хатĕрлес ĕçе çак уйăхсенче туса çитерессишĕн тăрăшмалла.

В. ОСИПОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Республикăри МТС-сем тракторсене юсамалли плана 1944 çулхи мартăн 1-мĕшĕ тĕлне мĕн чухлĕ тултарнине кăтартакан

СВОДКА

М.ТС-сем	Пурĕ юсанă (процентпа)	Февраль уйăхĕнчи плана тултарни (процентпа)	IV-мĕш кварталти тата январьпе февраль уйăхĕсенчи плана тултарни (процентпа)
Шăхасан	100,0	50,0	135,2
Комсомольски	100,0	50,0	108,6
Красноармейски	100,0	30,0	138,2
Йĕпреç	100,0	75,0	121,9
Елчĕк	100,0	300,0	174,2
Шупашкар	100,0	42,8	144,4
Ишлей	100,0	84,6	133,3
Элĕк	95,4	155,5	127,2
Куславкка	93,8	140,0	125,6
Вăрнар	92,4	100,0	125,6
Чкаловски	91,4	109,0	116,1
Сĕнтĕр	87,2	100,0	117,1
Первомайски	80,0	100,0	99,9
Вăрмар	78,7	140,0	102,7
Канаш	78,7	33,3	86,0
Çĕрпӳ	77,9	100,0	100,0
Шăмăршă	76,4	50,0	89,6
Çĕмĕрле	74,6	55,6	90,9
Етĕрне	71,7	63,5	103,4
Сĕнтĕрвăрри	71,4	100,0	100,0
Кувакино	64,9	66,6	93,8
Хĕрлĕ Чутай	60,8	50,0	77,7
Тăвай	59,3	233,3	96,1
Улатăр	58,1	62,5	80,6
Пăрачкав	48,8	86,6	70,0
Пĕтĕмпе	80.8	89.7	108,6
Февралĕн 25-мĕшĕ тĕлне пулнă	77,2	71,7	—

ЯЛХУÇАЛĂХĔНЧЕ МАЛТА ПЫРАКАНСЕН РАЙОНРИ КАНАШЛĂВĔ

ЭЛĔК. Кунта ялхуçалăхĕнче малта пыракансен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлăва пурĕ 500 çын ытла пухăннă. Çĕрĕç пай заведующийĕ Волков юлташ 1943-мĕш ялхуçалăх çулĕн итогĕсемпе умра тăракан задачăсем çинчен доклад турĕ.

Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче Элĕк районĕнчи колхозсем чылай паллă çитĕнӳсем турĕç. Уйрăмăнах выльăхчĕрлĕх ĕрчетес енĕпе тунă çитĕнӳсене палăртмалла. Район лашасен йышне 38,5 процент, ĕнесен йышне 43,1 процент, сыснасен йышне 16,2 процент, сурăхсен йышне—29 процент, кайăк-кĕшĕксен шутне 4 процент ӳстернĕ.

Районра çуракине хатĕрленес ĕç çителĕксĕр пырать-ха. Вăрлăхсем çитмен колхозсем пур. Вăрлăхсене 96 процент кăна сортланă. Вырăнти удобренисем хатĕрлесси те çителĕклĕ мар. Хĕлле уя тислĕк кăларассине 40 процент тултарнă, кĕл 77,5 процент, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 60,1 процент хатĕрленĕ, торф хатĕрлеме çак вăхăта çитсе те тытăнман. Ялхуçалăх инвентарĕсемпе машинăсене юсассине 85—92 процент пурнăçланă. Районра уйрăмăнах «Самолет», «Безбожник» колхозсем юлса пыраççĕ.

Слет участникĕсем, Советски районпа ăмăртăва тухма йышăнса, хăйсем çине çакăн пек обязательствăсем илчĕç: тĕштырă районĕпе вăтам шутпа кашни гектартан 14,5 центнер, çĕрулми 130 центнер, кантăр вăрри 4 центнертан кая мар илмелле. Çураки ĕçсене 10 ĕç кунĕнчен вăрăма тăсмалла мар. Фронтовой уйăхлăхра çуракине пур енĕпе те хатĕрленсе çитмелле.

Х. ЛИСИН,

Канашлăва хатĕрленмесĕр ирттернĕ

ИШЛЕЙ. Февралĕн 29-мĕшĕнче ялхуçалăхĕнче малта пыракансен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу 1943-мĕш ялхуçалăх çулĕн итогĕсемпе кăçалхи çуракине хатĕрленес задачăсене сӳтсе-яврĕ.

Канашлура пулнисем, Сĕнтĕр районĕпе ăмăртăва тухма йышăнса, хăйсем çине обязательствăсем илчĕç. Тĕштырăсене вăтамран районĕпе кашни гектартан 13 центнер, çĕрулми 110 центнер илмелле. Çураки ĕçне 7—8 ĕç кунĕнче туса пĕтермелле. Клевер вăррине çак кунсенчех хатĕрлесе çитерсе, ăна 1200 гектар акса хăвармалла, унтан 500 гектар вăрлăхлăх хăвармалла. Лашасен хисепне 6 процент, ĕнесен йышне 20 процент, сыснасен шутне 25 процент, сурăхсен шутне 25 процент ӳстермелле.

ВКП(б) райкомĕпе райисполкомăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне районра пур енчен те малта пыракан «Большевик» колхоза (председателĕ Ф. Пайманов юлташ) пачĕç. Канашлура пурĕ те доклад тăрăх 8 çын çеç тухса каларĕ, вĕсенчен нумайрах пайĕ районра ĕçлекенсем.

Калас пулать, ялхуçлăхĕнче малта пыракансен районри канашлăвне ирттерме кирлĕ пек хатĕрленмен. Вăл çакăнтан та лайăх курăнать. Канашлăва 115 колхозран пухăнас вырăнне 83 колхозран кăна пухăннă.

Т. ИВАНОВ.

Ют çĕршывсенче

Ют çĕршывсенчи хаçатсем Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи çыхăнусем çинчен

ЛОНДОН, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Англи хаçачĕсем паян Совет правительстви Финляндие перемири тĕлĕшпе сĕннĕ условисем çинчен нумай çырнă.

«Дейли мейл» хаçат вырăссен правительстви сĕннĕ условисене лайăх условисем тесе шутлать. Хаçат çапла çырать: Финляндин çав условисене халех йышăнмалла. Финлянди сывăх кунсенчех вăрçма пăрахсан, çакă никама та тĕлĕнтермен пулĕччĕ, мĕншĕн тесен Финлянди малалла вăрçма пултараймасть.

«Дейли геральд» хаçат çапла çырать: перемирин ултă условийĕ Финляндие вăрçма пăрахма тата никама пăхăнмасăр пурăнма май параççĕ. Паллах ĕнтĕ, Финляндие Германипе çыхăнма пăрахма çăмăл мар. Финлянди перемирин çав условийĕсене йышăнсан, çакăн результачĕсем калама çук пысăк пулаççĕ. Анчах кунтан та пахараххи вăл акă мĕн: Финлянди вăрçма пăрахни ытти государствăсене те шухăшлаттарĕ. Европăн кăнтăр пайĕнчи государство вăрçма пăрахать пулсан, унтан Европăн çурçĕр пайĕнчи государство вăрçма пăрахма хатĕрленет пулсан, — çакă вăл вăтаçĕрте вырнаçнă государствăсене те пырса тиветех

Англин каç тухнă хаçачĕсем хăйсен умстатьисенче Совет Союзĕ Финляндие сĕннĕ перемири условийĕсене ырлаççĕ. Финляндипе мир тумалли условисем, — тесе çырать «Ивнинг стантард» хаçат,— ăслă та, ырă кăмăлпа сĕннĕ условисем пулса тăраççĕ, вĕсене финсем май килнĕ таран ытларах кăмăллаччăр тесе тата ытти çĕршывсенчи ытла та сыхланулла çынсене лăплантарас тесе шутласа сĕннĕ.

Финляндин халь иккĕрен пĕрне суйласа илмелле. Е вăл нимĕçсене Финляндирен кăлармасăр тытса чарма хăтланĕ, çак ĕçре вырăссем пулăшнине хапăл туса йышăнĕ, е Германин кунçулĕ пек кунçула суйласа илĕ. Финлянди вăрçма пăрахни, хаçат шухăшĕпе, «Муссолини пĕтсе ларнăранпа чи пысăк событи пулса тăма пултарать».

«Стар» хаçатăн дипломати çинчен çыракан сотрудникĕ çапла çырать: перемири тусассăн Финляндин кунçулĕ Италинни пекех пулса тăрĕ, тесех хăратать Германи: «Нацистсем Финляндие хăратаççĕ тесе шухăшлама пысăк сăлтавсем пур», тет вăл.

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» тата «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатсем Совет Союзĕ Финляндие перемири тĕлĕшпе сĕннĕ условисем çинчен Мускаври радио каланипе курăнмалли вырăнта пичетленĕ.

ВАШИНГТОН, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Сенатăн ют çĕршыв ĕçĕсене пăхакан комиссийĕн членĕ демократ Мэррей (Монтана штачĕ) çапла каланă: Совет Союзĕ сĕннĕ условисем «питĕ ăслă та тĕрĕс» условисем пулса тăраççĕ, «Финлянди хăй йышăнма пултарнă условисенче вăрçма пăрахни пĕрлешӳллĕ нацисене нумай пулăшĕ».

Сенатăн ют çĕршыв ĕçĕсене пăхакан комиссийĕн членĕ республиканец Кэппер совет условийĕсене ăслă условисем тесе каланă, финсен вăл условисене йышăнма кирлĕ, тенĕ.

СТОКГОЛЬМ, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндипе перемири тумалли условисем çинчен Наркоминделăн Информаци Бюровĕ пĕлтернине Стокгольмри ярхи хаçатсем пурте пĕррĕмĕш страницăра пысăк саспаллисемпе пичетлесе кăларнă.

ЛОНДОН, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Стокгольмри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Швецин «Афтон Тиднинген» ятлă хаçачĕ çапла çырать: «Совет правительстви сĕннĕ условисем йывăр условисем пек туйăнаççĕ пире». «Финляндие канаш парасси пирĕн ĕç мар, — тет хаçат, — анчах та Финляндин лару-тăруне шута илсен, çапла каламалла: унăн çăмăлтарах условисем кĕтмелли çук».

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Анцио патĕнчи плацдармăн участокĕнче тăшман вăйлă атака пуçласа янă. Союзниксен çарĕсем атакăна сирсе янă. Кунта йывăр çапăçусем пыраççĕ. Тăшман плацдарм сарлакăшĕпех хĕсет

Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнче тата Америкăн 5-мĕш армийĕн фронтĕнче çаплах патрульсем кĕрешеççĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: февралĕн 29-мĕшĕнче американецсен йывăр бомбардировщикĕсем нимĕçсен Брауншвейг хули çине бомбăсем пăрахнă. Брауншвейг хули нимĕçсен самолетсемпе моторсем тăвакан промышленность центрĕсенчен пĕри пулса тăрать. Брауншвейг хули çине иртнĕ эрнере икĕ хутчен вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнăччĕ.

Мартăн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши бомбардировщиксем Хĕвеланăç Германири тĕрлĕ объектсене атакăланă.

ЛОНДОН, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: мартăн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Штутгарт хулипе тапăннă. Хулара вăйлă пушарсем тухнă. «Москито» йышши бомбардировщиксем Мюнхен хулине атакăланă, çавăн пекех тата Францине Голландири объектсене те атакăланă.

Мартăн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Германие тапăнма акăлчансен 600 самолечĕ ытла вĕçсе кайнă.

Мартăн 2-мĕшĕнче кăнтăрла Америка бомбардировщикĕсем Кăнтăр-Хĕвеланăç Германири тата Çурçĕр-Францири объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

ГЕРМАНИ САМОЛЕЧĔСЕМ АНГЛИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Лондон районĕнче кĕске вăхăтлăха сывлăшри тревога çинчен пĕлтернĕ. Хула районĕ çине нимĕçсен 6 бомбардировщикĕ вĕçсе тухнă, вĕсене часах хăваласа янă. Самолетсем çинчен пăрахнă бомбăсем суртсемпе магазинсене ишсе антарнă. Вилнисемпе аманнисем пур.

АВИАЦИН ЭРНЕ ХУШШИНЧИ ÇУХАТĂВĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: иртнĕ эрнере, февралĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа 28-мĕшне çитиччен, Германи çийĕнче пулса иртнĕ сывлăшри пысăк çапăçусенче тата Англие тапăннă чухне Германи авиацийĕн 700 самолет ытла пĕтнĕ. Американецсен 382 йывăр бомбардировщик тата 37 истребитель пĕтнĕ. Англи авиацийĕн 86 машина пĕтнĕ.

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ АДМИРАЛТЕЙСТВО УТРАВĔСЕМ ÇИНЕ АННĂ

ЛОНДОН, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка çарĕсем Бисмарк архипелагĕнчен çурçĕртерехри Адмиралтейство утравĕсем çине аннă. Вĕсем Лос Негрос утравне пĕтĕмĕшпех туртса илнĕ. Адмиралтейство утравĕсем çине американецсен çарĕсем аннă чухне японецсем сывлăшра та, тинĕс çинче те хирĕç тăрса çапăçма пултарайман.

ТОКИО, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çак вăхăтра Японин тинĕс пехоти Адмиралтейство утравĕсем çине аннă американецсен çарĕсемпе çапăçать.

ЯПОНИН ТИНĔС ÇИНЧЕ ПУЛНĂ ÇУХАТĂВĔСЕМ

ВАШИНГТОН, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). США-н тинĕс министрĕ Нокс пичет представителĕсене çапла каласа панă: Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсем Лăпкă океан çинче февралĕн 1-мĕшĕ иртнĕренпе Японин 18 карапне путарнă тата пĕр карапне путарнă пулĕ тесе шутлаççĕ, 3 карапне сиенленĕ. Унсăр пуçне тата Японин 110 суту-илӳ суднине путарнă, тата 7 суднине путарнă пуль тесе шутлаççĕ; 5 суднине сиенленĕ. Японин вăрçă пуçланнăранпа путарнă суту-илӳ суднисем пĕтĕмĕшпе 3 миллион тонна ытла таяççĕ

ГЕРМАНИРЕ АПАТ-ÇИМĔÇ ЙЫВĂРЛĂХĔСЕМ ӲССЕ ПЫРАÇÇĔ

ЖЕНЕВА, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарире тухакан «Сэнт—Геллер Тагблат» хаçат çапла çырать: Германире халăха тĕрлĕ продуктсем памалли нормăсем хут çинче кăна шутланса тăраççĕ. Тĕрĕссипе çăкăр кăна норма тăрăх параççĕ. Анчах çав çăкăр питĕ начаррине çынсем йышлăн чирлеççĕ. Юлашки вăхăтра выльăха рапс аврипе йӳçĕ кăшман çулçисене пама чарнă, мĕншĕн тесен çав çимĕçсем «вăрçă вăхăтĕнчи пахча-çимĕçсем» пулса тăраççĕ, тенĕ

Хаçат çапла калать: ялан тăраниччен çименнипе халăхăн вăйĕ хăвăрт пĕтсе пырать, йывăр ĕçлеттернипе вăл унсăрăн та халран каять. Çакăн пек те пулкалать: начарланса çитнĕ пирки рабочисем урапран ӳкеççĕ, ăнсăр пулса выртаççĕ, вĕсене вара йăтса илсе тухса каяççĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Чăваш АССР-ĕн прокуратурине бухгалтер тата ялан ĕçлеме ревизор кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Красная площадь, 26, ком. 39. Тел. 7—67. 2—1.

Чăвашкоопинсоюза ялан ĕçлеме техник-строитель, ĕçпе ĕçуксен экономисчĕ, бухгалтер-ревизор, экономист-плановик кирлĕ.
Адрес: г. Чебоксары, Красная площадь 4, Чувашкоопинсоюз. 3—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторан — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00573 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.